## КĔПЕР

Каллех бомба ватсан
Акă çак кĕпере,
Паттăр халăх ăна
Хывса лартĕ тепре.

Талăкра виçĕ хут
Кĕпере аркатсан,—
Виçĕ хут ларĕ вăл
Çĕнĕрен хыvăнса.

Ак старик çĕкленет,
Хăй тарне шăлкалать,
Шавлă шыв хĕрринче
Калаçать вăл çапла:

— Хамăн çан-çурăмран
Эп кĕпер тăвайсан,
Çак шыв урлă халех
Выртăттăм тăсăлса.

Хамăр ырă çĕре
Сыхлакан паттăрсем
Каçчăрччĕ хăвăртрах,
Тăшмана çĕнтерсе!

Ҫав ҫӑмах куранми
Кӗпер пек хывӑнать,
Пур этемлӗх унпа
Мир патне ҫул тытать.

Нимӗнле тӑвӑл та,
Нимӗнле бомба та
Кӗпере нихӑҫан
Аркатаймӗ кунта!